10. Вт
58
№ 3 Чуваш/62
№ 22 М. III. 142
10 Вт 58

БУКВАРЬ

ДЛЯ ЧУВАШЪ

СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ РУССКОЙ АЗБУКИ.

҂ЙАВАШ КЁНЕКИ.

ИЗДАНІЕ ВТОРОЕ

Православнаго Миссіонерскаго Общества.

КАЗАНЬ.
Типографія В. М. Ключникова, Б. Проломная ул., соб. д.
1883.

№ 54
10 В т 58

БУКВАРЬ

ДЛЯ ЧУВАШЪ

СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ РУССКОЙ АЗБУКИ.

҂АВАШ КЁНЕКИ.

ИЗДАНІЕ ВТОРОЕ

Православнаго Миссіонерскаго Общества.

КАЗАНЬ.
Типографія В. М. Ключникова, Б. Проломная ул., соб. д.
1883.

Отъ Совѣта Братства Св. Гурія печатать разрѣшается. Казань. 21 дня Декабря 1882 года.

Предсѣдатель Совѣта Братства Св. Гурія
Кириллъ, Епископъ Чебоксарскій.

274560

Прес 18453

ПРЕДУВѢДОМЛЕНІЕ.

Въ предлагаемомъ букварѣ упражненія идутъ по звуковому методу. Какъ вести эти упражненія—можно видѣть изъ самыхъ примѣровъ. Отдѣльныя буквы и слоги напечатаны чернымъ, жирнымъ шрифтомъ, а слова съ значеніями—мелкимъ. Въ первомъ упражненіи находятся три слова: **аш—говядина, аша—говядину, шу—двигайся;** во второмъ упражненіи тоже три слова: **шур—болото, ура—нога, шура—въ болото;** а въ третьемъ упражненіи восемь словъ и три краткихъ предложенія. Въ слѣдующихъ упражненіяхъ число предложеній постепенно увеличивается и даже находятся цѣлыя отдѣльныя фразы. Преподаватель, по своему усмотрѣнію, можетъ видоизмѣнять нашъ пріемъ обученія грамотѣ.

Для упражненія въ чтеніи въ букварѣ помѣщено 23 небольшихъ разсказа, 45 загадокъ и нѣсколько пословицъ и поговорокъ: все это можетъ также послужить матеріаломъ для устныхъ бесѣдъ. Въ числѣ 23 разсказовъ 4 послѣдніе нравоучительнаго содержанія: 20-й краткія нравоученія, обращенныя къ начинающему учиться грамотѣ, 21-й объ обязанностяхъ къ Богу и къ ближнимъ, 22-й разумѣніе грамоты дается отъ Бога (разсказъ изъ жизни преподобнаго Сергія), и 23-й разсказъ о томъ, что нужно ходить въ церковь и стоять тамъ до самаго окончанія Божественной службы. Когда ученики достаточно научатся читать почувашски, что при правильномъ обученіи можетъ быть вполнѣ достигнуто въ теченіи 2 или 3 мѣсяцевъ, слѣ-

дуетъ перейти къ русской азбукѣ, которая уже не представитъ особенныхъ затрудненій. Ученикамъ придется только познакомиться съ тѣми буквами, какихъ нѣтъ въ чувашскомъ алфавитѣ, причемъ можетъ затруднить ихъ только произношеніе нѣкоторыхъ русскихъ звуковъ. Чтобы достигнуть правильнаго произношенія и правильнаго употребленія въ письмѣ тѣхъ русскихъ буквъ, какихъ у чувашъ нѣтъ, русскому преподавателю необходимо познакомиться съ произношеніемъ чувашскихъ звуковъ и съ изображеніемъ ихъ на письмѣ, т. е. съ буквами; это также необходимо и для правильнаго чтенія почувашски.

Для чувашскаго языка принятъ русскій алфавитъ. Чувашскіе звуки, по произношенію сходные съ звуками русскаго языка, изображаются соотвѣтствующими буквами русскаго алфавита; для изображенія же несходныхъ звуковъ употребляются ближе подходящія русскія буквы съ придаточными значками. Съ принятымъ для чувашскаго языка алфавитомъ можно ближе познакомиться изъ слѣдующихъ 12 §§.

§ 1. Всѣхъ знаковъ или буквъ для изображенія звуковъ чувашскаго языка принято 25. Изъ нихъ 8 гласныхъ: а, е, у, ӳ, ы, и, ӑ, ӗ; 16 согласныхъ: в, л, ӆ, м, н, ӈ, р, к, п, с, ҫ, т, ҭ, ҕ, х, ш и краткое и (й̆).

§ 2. Гласныя въ чувашскомъ языкѣ двойственны, или парны: а—е, у—ӳ, ы—и, ӑ—ӗ. Каждая пара представляетъ одинъ и тотъ же основной звукъ, только въ одномъ случаѣ произносимый тѣрдо, въ другомъ мягко. Поэтому гласныя могутъ быть раздѣлены на *твердыя*: а, у, ы, ӑ, и *мягкія*: е, ӳ, и, ӗ.

§ 3. Парность гласныхъ звуковъ въ чуваш. языкѣ соотвѣтствуетъ *закону созвучія*, который состоитъ въ томъ, что въ каждомъ чуваш. словѣ гласныя должны быть или *всѣ твердыя*, или

всѣ мягкія. Закону созвучія подлежатъ всѣ измѣненія слова при склоненіи и спряженіи, а также грамматическія приставки.

Примѣчаніе. Отъ *закона созвучія* въ нѣкоторыхъ случаяхъ бываетъ отступленіе,—именно слово, въ корнѣ котораго есть твердая гласная, иногда принимаетъ въ окончаніи мягкую гласную или слогъ съ мягкой гласной; напротивъ же—т. е. чтобы слово, въ корнѣ котораго есть мягкая гласная, принимало въ окончаніи твердую гласную или слогъ съ твердой гласной,—никогда не бываетъ. Но случаевъ отступленія отъ закона созвучія не много и при томъ они не произвольны, а опредѣляются грамматическими условіями.

§ 4. На основаніи предъидущаго § всѣ слова чувашскаго языка могутъ быть раздѣлены на *твердыя*, въ которыя входятъ твердыя гласныя, и *мягкія*, въ которыя входятъ мягкія гласныя. Узнать, извѣстное слово *твердое* или *мягкое*, не трудно. *Твердое* слово требуетъ твердую приставку: та, па и т. д., а *мягкое* слово требуетъ соотвѣтственную мягкую приставку: те, пе и т. д. Для правильности письма иногда требуется знать извѣстное слово—*твердое* оно, или *мягкое*.

§ 5. Гласныя а, ы, и произносятся какъ порусски; у въ Ядринскомъ, Козмодемьянскомъ и Курмышскомъ уѣздахъ какъ русское о съ удареніемъ, а у всѣхъ остальныхъ чувашъ какъ русское у; ӳ мягче, чѣмъ русское у; е похоже на русское оборотное е (э), но мягче нѣсколько; ӑ и ӗ произносятся похоже на русскія а и э, или о и ё, если только послѣднія произносить быстро. Впрочемъ правильное произношеніе ӑ и ӗ лучше всего усвоить практически при помощи природнаго чувашенина. Звуки ӑ и ӗ не свойственны русскому языку.

§ 6. а, е, у, ӳ, ы, и имѣютъ опредѣленное и ясное произношеніе, мы ихъ назовемъ *долгими гласными*; ӑ и ӗ произносятся бѣгло и неопредѣленно,—*короткія гласныя*; ӑ и ӗ на концѣ словъ нерѣдко усѣкаются, теряются, чего не бываетъ съ прочими гласными.

§ 7. **Й** произносится какъ порусски; кромѣ обыкновеннаго употребленія послѣ гласныхъ, какъ въ руск. языкѣ, **Й** въ чувашскомъ служитъ для смягченія (йотаціи) гласныхъ. Всѣ гласныя смягчаются: **йа, йе, йу, йӳ, йы, йи, йӑ, йӗ.** Такія смягченныя гласныя въ чув. языкѣ встрѣчаются и въ началѣ, и въ срединѣ, и въ концѣ словъ.

§ 8. *Согласныя* въ чуваш. языкѣ подраздѣляются на *плавныя*: Л, Ӆ, М, Н, Ӊ, Р, В, и *нѣмыя*: К, П, С, Ҫ, Т, Ҭ, Ҕ, Х, Ш. Такое раздѣленіе согласныхъ на *плавныя* и *нѣмыя* установлено на основаніи отличительныхъ свойствъ тѣхъ и другихъ.

§ 9. *Плавныя* согласныя: Л, М, Н, Р, В произносятся порусски: передъ гласными *твердыми твердо*, а передъ *мягкими мягко*. Ӆ и Ӊ всегда произносятся мягче чѣмъ Л и Н. Ӆ и Ӊ употребляются только передъ твердыми гласными, напримѣръ: **выӆӑх, хуӊӑм.**

§ 10. *Нѣмыя согласныя*: К, П, Х, Ш произносятся какъ порусски,—передъ *гласными твердыми твердо*, а передъ *гласными мягкими* нѣсколько *мягче*; С, Т какъ передъ гласными твердыми, такъ и передъ мягкими *всегда произносятся твердо*, какъ русское **с** и **т** передъ гласными **ы, у, а, о**; Ҫ, Ҕ какъ передъ гласными твердыми, такъ и передъ мягкими всегда произносится *мягко*, какъ русское **с** и **т** передъ гласными **и, е, я, ю.** Ҕ у Курмышск., Ядринск. и Козмодемьянскихъ чувашъ произносится какъ русское ч; Ҭ знакъ для изображенія звука средняго между Т и Ҕ. Ҭ употребляется преимущественно въ окончаніи 3-го лица настоящаго времени единственнаго числа у тѣхъ глаголовъ, у которыхъ въ корнѣ твердая гласная: **пулаҭ, тӑваҭ, кайаҭ** и т. д. и въ немногихъ словахъ передъ твердой гласной: **аҭа ҭыха.**

§ 11. *Всѣ согласныя нѣмыя* въ чуваш. языкѣ: К, П, С, Ç, Т, Ҭ, Ť, Х, Ш *въ двухъ извѣстныхъ опредѣленныхъ случаяхъ подвергаются особенному смягченію*, именно: К произносится какъ русское г, П какъ б, С какъ з передъ твердыми гласными (а, у, ы), Ç какъ з передъ гласными: и, е, ю, я. Т какъ д передъ твердыми гласными, Ҭ какъ д передъ гласными мягкими, Ť также похоже на д, Х какъ г въ словахъ: Господь, господинъ; Ш какъ ж. Такое смягченіе согласныхъ нѣмыхъ въ чувашскомѣ языкѣ зависитъ единственно отъ извѣстнаго сочетанія нѣмой съ гласными и съ плавной согласной. Именно, каждая изъ 9 согласныхъ нѣмыхъ подвергается всегда вышеозначенному смягченію, если находится:

a) *Между гласными*: лаша (слѣд. читать лажа), пуса (пуза), тутар (тудар), пукан (пуган), упа (уба), кěçěр (кěзěр), хисеп (хизэп), ҭеҭек (ҭедек).

b) *Послѣ* плавной передъ гласной: карта (карда), калта (калда), пăлтăр (пăлдăр), куршанкă (куржангă), улпут (улбут) и т. д. Точно такъ же въ отношеніи *особеннаго смягченія* согласныхъ нѣмыхъ *предложеніе* или краткую фразу можно разсматривать какъ одно слово: ырă çěр, (читается ырă зěр), çара пуç—(сяра бусь).

Во всѣхъ другихъ случаяхъ *такому особенному смягченію* согласныя нѣмыя не подвергаются.

Примѣчаніе 1. Въ чув. языкѣ собственно вовсе нѣтъ согласныхъ г, б, в, д, ж; только въ 2 вышесказанныхъ случаяхъ к, с, п, т, ш произносится *похоже* на нихъ.

Примѣчаніе 2. Ученикамъ при обученіи грамотѣ почувашски нѣтъ надобности говорить о *смягченіи* согласныхъ нѣмыхъ. Они безъ всякихъ указаній со стороны учителя непремѣнно будутъ читать такъ, какъ слѣдуетъ; но самому учителю слѣ-

дуетъ обратить особенное вниманіе на такое свойство согласныхъ нѣмыхъ въ чувашскомъ языкѣ при прохожденіи русской азбуки. Это весьма важно для усвоенія мальчиками правильнаго произношенія звуковъ русскаго языка. Чувашенина сильно затрудняетъ употребленіе въ русскомъ языкѣ звуковъ **г, б, д, з, ж**, которыхъ у него нѣтъ, и **к, п, т, с, ш**, которыя у него подвергаются *смягченію*, а въ русскомъ языкѣ между тѣмъ нѣтъ. Чувашскихъ мальчиковъ при обученіи русской грамотѣ и русскому языку слѣдуетъ особенно упражнять въ произношеніи **г, б, д, з, ж** и **к, п, т, с, ш**, рѣзко показывая отличіе первыхъ отъ послѣднихъ.

§ 12. Слова, взятыя изъ церковно-славянскаго и русскаго языковъ, сохраняютъ свое правописаніе, исключая окончаній.

Примѣчаніе. Такъ какъ въ 22 разсказѣ есть русскія слова, то этотъ разсказъ слѣдуетъ прочитать съ учениками послѣ того, какъ будетъ пройдена русская азбука.

Для правильности чтенія почувашски русскому преподавателю нужно знать *мѣсто ударенія* въ отдѣльныхъ словахъ въ чувашскомъ языкѣ, которое опредѣляется слѣдующими правилами:

а) Удареніе всегда бываетъ на послѣднемъ слогѣ, когда онъ *долгій*, или когда въ слово входятъ однѣ *долгія* гласныя (а, у, ы, е, и, ӳ). или когда все слово состоитъ изъ короткихъ, бѣглыхъ слоговъ, т. е. когда въ него входятъ звуки ă или ĕ, (§ 6) напр. ҫакăн, ҫăваш, лаша, автăн, пăта, кăмрăк, пăтă, мăкшă, хăмăш, вăкăр, кĕмĕл, шăрҫăк, шăнкăрҫă.

б) На предпослѣднемъ слогѣ отъ конца, когда послѣдній короткій, а предпослѣдній долгій; напр. ҫарăк, ҫухрăм, купăс, курăк, кашăк, тутăр, тантăш, турăх, сулă, сулăн, паллă.

в) На третьемъ слогѣ отъ конца, когда два послѣднихъ слога короткіе, а третій отъ конца долгій, наприм. калăпăр, тарăпăр, вĕрентĕпĕр, тарçăмăр, пуçăмăр.

г) На четвертомъ слогѣ отъ конца, когда три послѣднихъ слога короткіе, а четвертый отъ конца долгій, напр. пулăттăмăр, калăттăмăр, вĕренĕттĕмĕр, виççĕмĕшĕ.

Объясненіе загадокъ. 1. Маҫҫа хăми. 2. Çул. 3. Мунҫа ҫулĕ. 4. Улăм пĕрҫи. 5. Ҫĕлхе. 6. Сехет. 7. Çыру çырни. 8. Мăйăр. 9. Йĕп. 10. Çара çуна 11. Вут. 12. Хут. 13. Кăвар туртни. 14. Хăмла. 15. Шăнкăрав. 16. Уйăх. 17. Суйеçтерни. 18. Çул. 19. Алăкпа алăк йанаххи. 20. Автан. 21. Такана. 22. Тăм ӳкни. 23. Кантăр. 24. Пуртă. 25. Пăри. 26. Шăл. 27. Укçа. 28. Пăр щăнни. 29. Стел урисем. 30. Хăйă ҫĕлни. 31. Купăста. 32. Ҫакак. 33. Йăшка çине çу йани. 34. Тӳшек. 35. Пир тĕртни. 36. Кимĕ. 37. Урайĕ щăлни. 38. Питĕрекен çăра. 39. Хăмла. 40. Кăкшăм. 41. Алса тăхăнни. 42. Çăпата. 43. Нӳхреп. 44. Турă. 45. Лаша.

а.

у. ш.

аш, ша, уш. шу, аш, аша, шу.

р.

ар, ра, ур, ру. шур, ура, шура.

п.

ап, па, уп, пу. упа, пур, пар, аппа, пура, шапа, урпа, урапа, аппа пур. урапа пар. пурара урпа пур.

с.

ас, са, ус, су. пус, сар, пуса, пасар, парас. пушу пура. пус пур. пуса сар. аппа аш пар. упа урупа пус.

л.

ал, ла, ул, лу. ала, ула, сул, лар, лап, алса, лаша, апла. ала пар. пусса сур. лапра упа пур. шура пуса сарас. пурара ула лаша пур.

х.

ах, ха, ух, ху. хур, хуш, хура, суха, хула, хушпу, хупах. аллу хура. хушпу пур. хура урпа пар. хура лаша сухара. ула лаша пурара. хулара хура сахар пур. ула хура урпа сапса пар.

ă.

ăш, шă, ăр, рă, ăп, пă, ăс, сă, ăл, лă, ăх, хă. шăл, ăса, пăр, хур, ала, усă, пушă, сасă, аслă, аллă, ăслă, сулă, усăлă, паллă, сăпса, сăсар, халăх, хăлха, пусă, пулă, лăпă, сăпă, сăр, сарă, сăра, пăру, урлă, пăхăр, ăшă, шурă, шăршă. пăшал пăхас. сăсар сăрă. шурă пулă шăршăсăр. хулара сахăр пур. упа сăрă. хур шурă. улăхра ула лаша пур. пушă пурара ула хур пур. аппа, хура сурăха урпа пар. хура сахара алапа урпа аласа пар.

н.

ан, ка, ун, ну, ăн, нă. ăна, ан, пăр, шăна, сана, хăна, сăра, панă, унăн, пулă, ăсан. санăн, палан, сăран, сухан, аршăн. хуран хура.

сăра сарă. пăр шăннă. хур ларнă. ăсан сахал. алсăна хур. ăна пулă панă. санăн ану аслă. унăн урпа пур. санăн урпу саралнă. сахарăн сухан сахал. санăн уру урлă. хурлăхан хуп-хура пулнă. санăн ашă шăршăланнă. лашана урпа сахал панă. сахар, санăн лашу улăхра пурăннă. санăн аппу лаппа пуса сарнă.

Ç.

аç, ça, уç, çу, ăç, çă. лаç, пуç, хуç, çап, çул, çапă, çуна, шурă, сарă, çара, çула, çарă, çурла, çăпан, çăхан, пăрça, пуçах. çапă пар. çăхан хура. хур шурă. пăрça çăлас. пусана пухас. çарана çулас. çаппа ан хуç. пуçран ан çап. лашана пушăпа çапнă. санăн пăшална хуçнă. хура лашанăн шăл сахалланнă. çула урапана çупа çула. уçăп хуçăна аллăна ан пар. сана упа уруна хуçça хурлăхланă. усал лашана пушăпа ан çап. çунана лаçça сулăхăна хурса çăрапа çăрала.

М.

ам, ма, ум, му, ăм, мă. ама, пар, сум, мул, хăма, ăман, шăмă, улма, урам, улăм, сăмах,

салам, çухрăм, хăмла. улăм сахал. мул пар. мана пуççап. санăн улма пур. мана хăма пар. сахар, мана улма пар. çара çуна лашана çăмăл. манăн ума улма ан хур. ула лашана улăм сахал пулнă. ăна хулара улшуçă хура лаша панă.

т.

ат, та, ут, ту, ăт, тă. атă, утă, тус, хут, аçа, тар, тăм, тура, тăлă, пăтă, пăта, хурт. апат ту. çăпатана сапла. усалтан тар. турана хур. мана хут пар. тарас тăлăп сутнă. санăн сурăхă аманнă. хулара утă сутрăм. аçăна сăра тума хуш. макар арпалăхра тăмана курнă. пултăран татрăм та урхамах утлантăм. тусăм, сана хам алсама паратăп. хура пăру улăхра утăпа мăнтăрланнă. ăна ултă упа тупнă та туртса çурнă. аллупа парта урупа ут.

ы.

ым, мы, ыс, сы, ыç, çы, ыл, лы, ыр, ры, ын, ны, ып, пы, ыш, шы, ых, хы. пыл, пыр, хыр, çыр, сыр, çын, ырă, хырă, çыру, ыраш, çырла, сывлăш. тăпрана хыр.

урăна сыр. сухална хыр. аппăна салам çыр. ыраш сахал. ыран пасара пыратна? çăпанна çыхса хур. çурлăна хур та çырла тат. сăпсана пыл сахал пулнă. ăна çыру çырса пар. манăн ыран халлап çырас. усламçă хулана аслă çулпа пынă.

Ҫ.

аҫа, ҫунсăр, ҫан, тырă, лаша, арҫа, ҫăхă. пăнҫă, мунҫа, улаҫа, ҫăмăр, пыҫҫăр, ҫăпар, ҫуста, наҫар, ҫăлха. лашана ҫар. ҫăлана хуп. мунҫа хутăр. аҫăна ҫăлха паҫҫăр. ҫăхха урпа сап. атта ҫăлхапа тăхăн. улаҫапа ҫăлхана арҫана хур. пахҫара улма ҫăмăртана пуçланнă. манăн аппа ҫуста çăрнă. сарă ҫăхха тăмана тытнă. мунҫаран манăн çынтан маларах тухас. аҫам, наҫар утатăн,— ҫасăрах ут.

В.

çав. шыв. вут. лав. вăрă, ватă, пулă, ăвăс. васан, хăвăл, автан, вырăс, вăрлăх, ҫăваш. тăвăр. вăрман. сывлăш. вут хут. ватă хырă. вăрмана сыхла. автан ватă. пулла вăлтапа тытнă. вăрманта вутă пухрăмăр. çаранта утă çул-

тăмăр. çапăран çатан авса хутăмăр.*) 1, вырăспа тутар хутăш. çурлапа çула тырă выратпăр. утă сутса мул турăмăр. ватă лашана наҫар турта пăрса хур.

К.

шак, рак, мăк, каç, хуп, çын, каҫҫă, каҫака, ашăк, çарăк, куккук, кăнтăрла, курка, карас, вăкăр, сăпка, кăрăкка, кăткă, кашăк. кашкăр тытас. мăк çăлас. алăка хуп. кашăкпа пăтă сып. шывра карас пур. сурăха курăк пар тараканпа хăнтăла тус пулнă; таракан халлап каланă, хăнтăла тăнласа тăнă; тăнланă, тăнланă та çывăрнă. хăвана çамрăк ҫух ав. кашкăр тытма капкан хутăм; кашкăр капкан урлах каçнă та капкан çапах çапман. 2, вăрмантан вăрăм, курăкран лутра. аҫа пăҫана сак урлă вырт-нă ҫух çап, сака тăрăх выртнă ҫух ан çап вара.

ĕ.

хаклă, шурă, хырă, тĕвĕ, сĕт, ĕç, тĕс, тĕк, çĕр, сĕр, тĕп, кĕл, хĕр, ҫĕн, ĕмĕр, пĕкĕ, кĕлĕ,

*) Объясненія загадокъ помѣщены въ концѣ предувѣдомленія.

сĕлĕ, çĕрĕ, пĕлĕт, сĕрĕм, çĕлĕк, кĕмĕл, кĕçĕн, пĕтĕм, пĕлтĕр. хĕрлĕ пĕке. çĕнĕ ҫĕн. пĕлĕт. манăн сĕт пĕтрĕ. унăн пуçĕ пысăк. ĕмĕр тăрăшшĕ вăрăм. манăн пĕлтĕр кĕмĕл пурҫҫĕ. ҫĕн ҫĕлпĕр ҫас пĕтмĕ. кĕмĕл çĕрĕ пăхăртан хаклă. пĕр çын çĕркĕ мунҫа кĕҫĕ. 3, пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк. 4, шурă хырăн ăшĕ хăвăл. 5, хуп хуп пахҫа хуп пахҫа, хуп пахҫара шăмă пахҫа, шăмă пахҫара хĕрлĕ автан. шывăн турăҫĕ çук. 6, ҫунсăр çын вăхăт пĕлет.

И.

ир, çи, пир, вир, хир, кин, мимĕ, пытар, ҫипер, тилĕ, пилĕк, çимĕç, симĕс, мимĕр, пиллĕк, каҫҫă. çĕнĕ тимĕр. вир тĕвĕр. çи аҫам. ку хĕр ширĕн. çăмарта ҫас пиçĕ. пĕр çыннăн пилĕк кин. вăрман хăлхалă, хир куçлă. ҫăн сăмахăн суи çук.

Ӳ.

сӳ, çӳç, сӳс, кӳл, ҫӳк, тăм, пушă, пӳрт, суха, кĕрӳ, акнă, ӳсĕр, кĕтӳ, ӳкнĕ, кӳршĕ, ҫиркӳ. пӳлĕм, вырăн, кĕтӳçĕ, тилĕ, хĕрлĕ. çарăк сарă. иван пысăк ӳснĕ. алла тăм илнĕ. çĕнĕ кĕрӳ

килнӗ. манăн атта шыв витрӗ. çӗркӗ аҫа сăпкаран ӳкрӗ. сахар пӳрт пит хӳхӗм лартнă. пирӗн кӗтӳçӗ тилӗ тытнă та ăна ӳлпута сутнă; улпут ăна шав кӗмӗл укçа панă. кӗтӳçӗ вăл укçапа пӗр пăру илнӗ. упапа каҫҫă çарăк акнă: упана кӳлнӗ, каҫҫă суха пуçӗ тытнă.

е.

епӗ, есӗ, хӳме, кӳме, хӳре, тӳме, тӳпе, вите, тӳшек, сӳре, калек, атте, анне, ҫӳреҫе, çерем, кӗпер. çӗнӗ вите. кӗнекене кӳр. пасарта сӳре сутрăм. хуралтине тăвиҫҫен, çине хатӗрле. инçерех хурсан илме çывăх. аҫа-пăҫана шанакан хăрах куçлă пулнă тет; тарçа тӗрçе шанакан сӗм суккăрах пулнă тет. 7, шурă ана çине хура вăрлăх акаççӗ. çиле сенӗкпе тытас çук. усал сăмах çилпе вӗçет, ырă сăмах çуран çӳрет теççӗ. анаталла шырасан шывăн вӗçне тупас çук; тăвалла шырасан, вӗçне ҫăс тупăн. пеме пӗлмен алтуи хăне çавăрăнса тивнӗ тет. кӗрӳ патӗнҫе пурăннă ҫух, кăмака çинҫе ларса пурăн. çын пуссине тарăн ан алт.

Й.

май, туй, йус, йур, йĕп, йĕр, йал, йат, йут, йăх, кĕвĕ, йăва, йытă, уйран, йашка, ҫийе, йурă, сăвă, йупа, ăйхă, хăйра, йĕтĕн, йĕтем, йĕвен, майра, йăран, йывăç, хăйар, хăйăр. тӳрĕ кайан тăванне йураман тет. утна йар та çуран ут, теççĕ ваттисем. улма йывăççинҫен улми айакках кайса ӳкмест, теççĕ. сысна лаша патне пынă тет те: „санăн урусем те кукăрмакăр, çăмă та йака мар,“ тесе каланă тет. 8, пеҫĕкçĕ хуранăн йашки тутлă. 9, тимĕр йыттăн сӳс хӳре. çӳрен каска йакалнă, выртан каска мăкланнă. хăна тивмен çĕлен калтана ан тив, вăл хăй çулĕпех çӳретĕр. 10, ăçта кайатăн икĕ ура? тăватă урана шырама. ăçта кайатăн тăватă ура? ултă урана шырама.? ăçта кайатăн ултă ура? выртнă упана тăратма. 11, пăхма çăмăл, йăтма йывăр. 12 йăтма çăмал, пӳрт урлă ывăтса каçарас çук.

Ӆ.*)

выӆӑх, хыӆӑх, шаӆça, уӆук, пыӆҫӑк, хӑӆҫӑк, йĕлме, йĕлтĕр, пĕлтĕр, çĕлен, илен, илем, кӳршĕ, вĕлтĕрен, ҫеҫен. хыӆӑх çур. шаӆça шӳрет. çул пит пыӆҫӑклӑ: шаӆçасӑр çатан авмаççĕ. манӑн куça хӑӆҫӑк кĕҫĕ. 13, аслӑ йалтан кĕçĕн йала тӳ̆ килет. 14, нарат, нарат çинҫе турат, турат çинҫе йăви, йăви çинҫе çăмарти. 15, йăс витере йăс ăйрă кĕçенет. хурама пĕрни хăй йенеллех пĕрĕнет теççĕ. шанҫăклă хăвара кайăн çук теççĕ. тӳрĕ кайан пӳлĕннĕ, тавра кайан савăннă. ĕлĕк каҫҫа кайас тейекен хĕр каҫҫа кайайман тет; вилес тейекен карҫăк вилеймен тет. вуникĕ кушак пур çинҫе хуран çăвас хуйхи çук. вуникĕ йытă пур çинҫе хуравлă тăрас хуйхи çук. вуникĕ каҫака пур çинҫе купăста касас хуйхи çук. вуникĕ сысна пур çинҫе улма (паранкă) кăларас хуйхи çук. вуникĕ пиҫҫе пур çинҫе суха тăвас хуйхи çук.

*) Слѣдуетъ обратить вниманіе учениковъ на то, что Ӆ, а также Ҭ и Ӈ пишутся только передъ твердыми гласными: а, у, ы, ă. Сравнить употребленіе Ӆ, Ҭ и Ӈ съ употребленіемъ буквъ Ç и Ҫ; послѣднія пишутся передъ твердыми и мягкими гласными.

Ť.

аť а, ťыха, пулаť, тупаť, калаť, кураť, кӳрет, илет, çийет, тенкӗ, тенкел. аť а киле. ťыха таçта çухалнă. иван йалан укçа тупаť. çыру пӗлекен çыннăн куçӗ пурне те курса тăраť. ырра курсан ырă пулаť; усала курсан усал пулаť. пӗр уйăх ӗçлет те çулталăк пурăнаť? кăнтăрла хӗвел пăхаť, çӗрле уйăх тухаť. çип çинçе çӗртен татăлаť. 16, пӳрť тăрринҫе çур çăкăр выртаť. мӗне асăнни вăл пулаť? вăйăран вăкăр тухаť. ут ӗçерӗнет тыттараť; сăмах ӗçерӗнет тыттармасť. Ҫăн сăмахăн суи çук. 17, Çеçен хирте туман урапа кусаť. ана йăрансăр пулмасť. 18, Хирте вăрăм вырăс выртаť.

Ҥ.

ҥака, мăкăҥ, мӗшӗн. кӗнеке, йӗвен, хуҥăм, хуҥамăш, хуҥҫăкам, кӗçӗн, инсе, йинке, ӗнер, йӗнер, ӗне. мăкăҥ пулнă. ҥака çăпата тăваť. епӗ ӗнер кӗнеке вуларăм. ир тăнă кайăк выçă вилмен тет. пуйма кийакан вилнӗ, вилме кайакан пуйса килнӗ. тухсан та, кӗрсен те алăка хупса çӳре. 19, кинӗ лараť, хуҥамăшӗ çӳрет.

укçа нуммай пулсан арман тыт; ыраш нуммай пулсан сысна усра.

(Здѣсь слѣдуетъ показать ученикамъ прописныя буквы разъяснить, въ какихъ случаяхъ онѣ употребляются).

а А, ă Ă, у У, ы Ы, е Е, ĕ Ĕ, ӳ Ӳ, и И, й Й, в В, л Л, ҫ Ҫ, м М, н Н, ҥ Ҥ, р Р, с С, ç Ç, ш Ш, к К, х Х, п П, т Т, ҫ Ҫ, ҭ Ҭ.

1. Автан.

Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур. Вăл тăркăнтăрла урапа çине хăпараť те „ки-ки-рик-ку“ тесе авăтаť. Сасси аван: хӳри илемлĕ. авăна, авăна тăраť. Кикирикки пысăк; тĕклĕ уралă; каҫи вăрăм. Сирĕн автан çапла-и?

Йăмах. 20. Пуçĕ тура, куҫĕ çурла.

Ваттисем каланă сăмах. Ĕç вилсен те виç кунлăх йулаť тет.

Йурă. Кĕрепенкке çурă хут-укçа,
Халҫ кӳртем те халҫ сăвам;
Мана атте йатлас çук.

Нӑт та çурӑ пӑхӑр укçа,
Халӑ кӳртем те халӑ сӑвам;
Мана атте йатлас çук.
Хӗрӗх ӑрка пирӗм пур,
Халӑ кӳртем те халӑ хурлам;
Мана анне йатлас çук.

Йӑмахсем. 21. Çурӑмӗ пур, хырӑмӗ çук. 22. Ӑупса, ӑупса пынӑ ӑух кӗмӗл çӗррӗм тухрӗ ӳкрӗ, ӑна уйӑх курӑ, хӗвел илӑ. 23. Патӗнӑен пӑхсан тамӑр хӑва, айакран пӑхсан ӗнӑ хӑва.

Ваттисем каланӑ сӑмахсем. Кушака кулӑ шӑшийе, вилӗм. Йыттӑн хӳри кукӑр, ӑна шанма çӳк, теççӗ.

2. Пӗр çын шывпа пӗрене йухса кайнӑне курнӑ. Вӑл шыв хӗррӗне пырса, пуртӑпа тытма хӗтленнӗ ӑна. Пуртине пӗрене çине лартнӑ та ӑраймасӑр аллинӑен ӗçӗрӗннӗ кайнӑ.

Ваттисем каланӑ сӑмахсем. Пуртӑ аврине тытма хӑтланса пуртине йанӑ тет. Вилнӗ хура ӗне сӗӑ тутлӑ теççӗ. Хуйхӑ пуçа ус-

тараť. Йĕп ăçта, çип унта. Йур çинҫен кăмпа ан шыра.

Йăмахсем. 24. Суккăр автан сиксе авăтаť. 25. Пĕр сăпкара икĕ аҫа. 26. Икĕ кашта ҫăххăм пур, пур те шап шурă.

Сăвă. И кив кантăр, кив кантăр,
Сыппи таран çĕнĕ кантăр,
Кунтан вăйă пĕтсессĕп,
Арăмсенĕн ҫун кантăр.

3. Ĕлĕк пĕр карҫăк аҫине ак çапла йăпатнă тет: тĕлит, тĕлит, Микулайăн, икĕ сум укçи пур ĕçке: пӳрт те илес тет унпала, кĕлет те илес тет унпала, хĕр те илес тет унпала, лаша та илес тет унпала.

Йăмах. 27. Лутра вырăс йал касаť.

Ваттисем калана сăмахсем. Çĕр сум укçу пулиҫҫен, çĕр тус пултăр. Çукран пур пулакан Турăпа тан, пуртан çука йулакан çĕрпе тан. Ыратмасăр çăпан тухмасť.

4. Кашкăр.

Кашкăр путек тытса кайнă тет. Тилĕ ăна ан çитĕр тесе йăпатаť тет; „ак епĕ ăна хĕрхентĕм, тирĕпе шăммисене хăвартăм!“ тесе каларĕ тет кашкăр.

Йăмахсем. 28. Пуртăсăр, савăлсăр, сăвайсăр кĕпер хываť. 29. Пĕр пĕркенđĕк айĕнđе тăватă хĕр йĕрет. 30. Пĕр çын пăснине пин çын тӳрлетеймест. 31. Пđикçеççĕ пукане пин хут кĕпе тăхăнаť.

Ваттисем каланă сăмахсем. Турă пит çӳлте, патша пит айакра. Пĕр кун кăймалла пулсан çиđĕ кунлăх çăкăр хатĕрле теççĕ. Çапайман пысăк çĕкленĕ тет.

5. Đакак.

Đакак çула вăрманта пурăнаť, хĕлле, йур çусан йала пыраť. Çула вăрманта вăл đĕпе кăлараť; йалтан çăмарта вăрласа кайса, đĕпписене тăрантараť. Хĕлле сивĕ пулсан, йывăрлăх çине лараť те: „đак-đакак, đак-đакак“ тесе đакаклаť.

Йăмах 32. Пĕҫĕкçĕ кĕлетĕн тĕкки вăрăм.

Ваттисем каланă сăмахсем. Кирек хăш пӳрнене çыртсан та ыратаť. Шыв хĕрне пырсан ура йĕпенмесĕр пулмасť. Çуртра тиркĕ ҫашкă шалтăртатмасăр пулмасť теççĕ.

6. Пĕр çыннăн укçи çухалнă тет, вăрăне нийепле тупаймаççĕ тет. Пухăнат тет пуху. Пуху пухăнса çитсен стараста каларĕ тет: „ватăсем, вут тухрĕ: вăрă çинҫе çĕлĕкĕ çунаť“ тесе каларĕ тет. Пĕр çын пуçĕнҫи çĕлĕкне аллипе йаҫĕ тытрĕ тет. Вăрă çаввăне пĕлҫĕç тет вара.

Вăрă вăрăм, куçĕ ҫармак, пилĕкĕ çинçе. Алли ĕçленине çурăмĕ çĕклĕ.

Ваттисем каланă сăмахсем. Ҫавса çывăх та çыртмалла мар. Вунă хут виç те пĕрре кас.

Йăмах. 33. Шĕвиккĕм-шĕнкерĕм,—шыва йатăм путмарĕ,

Йурă. Ăсатас пулсан ăсатăр.

Пусмăр çине тухса тасатăр.

Епир хăш çулпала кайнине,

Икĕ хура куçăрпа пăхса йулайăр.

7. Икĕ çын çул çинҫе хирĕç тĕл пулнă тет те пĕрпĕринĕн çунисене çаклатнă тет. Пĕри кăшкăрать тет: „çулăн пĕр йĕнелле пăр халĕ, манăн хулана каймалла ҫасрах!“ тесе калать тет: Тепĕри:„есĕ пăрса тăр халĕ, манăн киле ҫăсрах каймалла“ тесе калать тет. Вăсем çапла нуммай тавлашса тăнă тет. Виççĕмĕш çын пырса çитрĕ тет те: „сире пит ҫас кирлĕ пулсан мана çул парăр халĕ“, тесе каларĕ тет.

Ваттисем калана сăмахсем. Ăсли шухăшлаҫҫен ухмаххи çапса ӳкернĕ тет.

Йăмахсем. 34. Алăсăр, урасăр кĕпе тăхăнать. 35. Çăрттан ҫăмах пырать, парĕ шăнах пырать. 36. Халь кайрĕ, йĕрĕ çук.

8. Пĕр аҫа кĕнеке ыйтнă; ăна пĕр кĕнеке панă. Вăл каланă: „кăна ăнланмалла мар“, тенĕ. Ăна тепĕр кĕнеке панă. Вăл каланă: „ку йăлăхтарать“, тенĕ.

Ваттисем калана сăмахсем. Ĕç хытă, ҫикет вăл. Ĕçрен ан хăра,—вăл санран хăратăр. Çынна ĕç типĕтмест,—хуйхă типĕтет. Йытта тилĕ тума çук.

Йăмахсем. 37. Тух тухатмăш тулалла, кĕр пĕтермĕш шалалла. 38. Йурлă пăрлă çумăр çăваť,—хура ҫĕкеç тулта лараť. 39. Ши кайаť, пи кайаť, çӳле кайаť çăмарта тăваť.

9. Пăсара.

Пăсара пăхăрçă пӳртне кĕҫĕ тет те, йĕкеве (потпилка) çула пуçларĕ тет. Хăйĕн ҫĕлхи çинҫен йун йуха пуçларĕ тет. Ку йун тимĕртен тухаť пулĕ тесе, шухăшлаť тет; ну вăл савăнса тата хытăрах çула пуçларĕ тет. Çула, çула пăсара ҫĕлхине пĕтĕмпе пăснă тет.

10. Пĕр ҫăхă куллен пĕрер çăмарта тăваť тет. Тата нуммайрах тутăр тесе, йышпи ăна хытăрах çитере пуçларĕ тет. Ҫăхă мăнтăрланҫĕ тет те, пĕр çăмарта та туми пулҫĕ тет.

11. Вăрăм-тунасемпе ăстарик.

Пĕр ăстарик çула вăрманта канма выртнă тет. Вăрăм-тунасем пыраççĕ тет те ун патне: „п-и-ҫ-ҫ-е-п-ĕ-т-ҫ-е-н“ тесе калеççĕ тет. Пĕри

çапла каласа кайаť тет те, тата тепĕри пыраť тет: „п-и-ҫ-ҫ-е-п-е-т-ҫ-е-н“ тесе калаť те. Áстарик, выртрĕ тет те: „халĕ пĕри ĕçсе кайрĕ; есир мĕн пĕҫҫенĕ, теминçенĕн“ тесе калаť тет ăстарик; сăкманĕпе ҫипертерех пĕркенсе выртрĕ тет те, çыртма паман тет. вара.

12. Ҫи-ҫи кăсйа, ăçта кайатăн кăсйа? кантăр вăрри çимешкĕн. Йĕ хуçи курсассăн? Тарăп, хăпарăп хырă тăррине. Йĕ хырăмă выççассăн? Хырă икелĕ çийĕп ĕçке. Йĕ пырна ларсассăн? Ҫавап, ҫавăп, каларăп. Йĕ йун тухсассăн? Шыва кĕрĕп, ҫӳхенĕп. Йĕ тĕкĕ шăнсассăн? Вут хурăп та ăшăнăп. Йĕ вутă вăйлă кайсассăн? Тапăп, тапăп сӳнтерĕп. Йĕ уру хуçăлсан? Тимĕрçе кайăп, сыптарăп. Йĕ тимĕрçĕ çук пулсан? Пăхăрça кайăп, сыптарăп. Йĕ пăхăрçă çук пулсан? Улатăра кайăп, сыптарăп. Йĕ Улатăр çук пулсан? Ҫĕмпĕре кайăп, сыптарăп. Йĕ Ҫĕмпĕр çук пулсан? Тапăп, тапăп, тапă айне кĕрех кайăп.

Ваттисем калана сăмахсем. Ахăлҫ тăраҫҫен кĕрĕк аркине йăвала, теççĕ. Йытă те-

сен,—çăмĕ çук, етем тесен,—сăнĕ çук. Вăйăран вăкăр тухат, теççĕ. Шывăн тураҫĕ çук.

Йăмахсем. 40. Хура така шыва анаť. 41. Тăваттăн пӳрте кĕреççĕ, пĕри ҫăлана кĕрсе йулаť. 42. Пĕр шăшинĕн икĕ хӳре. 43. Хăй пӳрт пек,—мĕлки çук. 44. Пиртен пӳртре кам аслă?

13. Пĕр çын хăй айĕнҫи лашине виçĕ кун шыранă тет. Пĕр йала пырса: „лаша курмарăр-а“? тесе ыйтнă тет, „çук, курмарăмăр“, тесе каланă тет. Тата тепĕр йала пырса: „лаша курмарăр-а“? тесе ыйтнă тет. „Çук, курмарăмăр“, тесе каланă тет каллех. Çапла йалтан йала тек çӳренĕ тет. Çӳресен, çӳресен пĕр ăслăрах çынна тĕл пулнă тет те: „есĕ ăçта та пулин йут лаша çӳренине курмарăн-и?“ тесе ыйтнă тет. „Çук, курасса курмарăм“, тесе каланă тет ку. „Санăн лашу хăçан çухалҫе?“ тесе ыйтнă тет. „Пайанхипе виçĕ кун ĕнтĕ“, тесе каланă хăй. „Лашу мĕн тĕслĕ-ҫĕ?“ тесе ыйтнă тет каллех çынни. „Ула-ҫĕ,“тесе каларĕ тет. „Çак ху айăнтийех мар-и?“ тесе каланă

тет лешĕ. Хайхи йуналут çинҫен анса, лашине пăхнă тет те: „çакă, çакă!“ тесе калана тет. Лаши çине сиксе утланнă тет те савăнса ҫуптарса кайнă тет килне.

Йăмах. 45. Тăваттăн тĕвеççĕ, пĕри авăсаť.

14. Лашапа тарçă.

Пĕр тарçă лашана панă сĕлле лаша уйĕнҫен йалан вăрласа сутнă, хăй лашана куллен тасатнă. Лаша каланă ăна: „санăн мана ҫăнах илемлĕ тытассу килсен, манăн сĕлле ан вăрла“, тенĕ.

15. Сăвакан ĕне.

Пĕр çыннăн сăвакан ĕне пулнă; вăл куллен пĕрер ҫулмек сĕт панă. Çав çыннăн хăна йыхăрмалла пулнă. Вăл çын сĕт пуммай пухăнтăр тесе ĕнĕне вунă кун сумасăр тăнă. Вуннăмĕш кун вăл ĕне вунă ҫулмек парĕ тесе шухăшланă вăл çын. Ĕненĕн сĕҫĕ типнĕ те вăл ĕлĕкхинҫен те сахал панă вара.

16. Кашкăрпа карҫăк.

Выç кашкăр апат шыраса çӳрет тет. Пĕр йал патне пынă тет те хĕррĕнҫи пӳртре аҫа йĕнине илтех кайрĕ тет. Тата вăл пӳртре карҫăк сасси илтĕнет тет. Карҫăк аҫана ҫараť тет: „йĕрессе ҫарăнмасан ен сана кашкăра парăп ак“, тесе калаť тет. Кашкăр ăна илтсен тапах ҫарăнҫĕ тет те „ку аҫана халь кăларса пăрахĕç мана“, тесе, кĕтсе тăраť тет. Каçах пынă ĕскер çур çĕрҫĕен кĕтнĕ тет. Хайхи ларсан, ларсан татах карҫăк сасси илтĕннĕ тет. Карҫăк аҫана калаť тет: „ан йĕр аҫам, ан йĕр; кашкăра памăп сана; килтĕр халь кашкăр кунта, ҫукмарпа çапса вĕлерĕпĕр ăна!“ тесе каларĕ тет. Ăна илтсен, кашкăр шухăшларĕ тет: „ку пӳртре каласса пĕр тĕрлĕ калаççĕ те, тăвасса урăх тĕрлĕ тăваççĕ курнаť“ тесе каларĕ тет кашкăр: вăл вырăнтан пăрахса кайрĕ тет вара.

17. Сармантейĕн сарă ҫăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă ҫăххи те ка-

калаť. Хапхи калаť: „Манăн та уçăлса хупăнас“, тет. Анаť пĕр вăкăр шыва куллен кун: „хапха, есĕ мĕшĕн уçăлса хупăнатăн?“ тет. „Уçăлса хупăнмасăр“, тет: „Сармантейĕн сарă ҫăххи сарă çăмарта тунă, ăна шăши пынă та хŭрипе çапса çĕмĕрнĕ: Сармантей те йĕрет, сарă ҫăххи те какалаť!“ Вăкăрĕ калаť: манăн та мĕкĕрсе анас“ тет. Мĕкĕрсе анаť шыв хĕррĕне. Шыв калаť: „мĕшĕн, вăкăр, мĕкĕретĕн?“ „Мĕкĕрмесĕр, тет: Сармантейĕн сарă ҫăххи сарă çăмарта тунă тет; ăна шăши пынă та хŭрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет: Сармантей те йĕрет, тет, сарă ҫăххи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť.“ Шыв калаť: „Манăн та хумханас“, тет. Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анаť: „шыв мĕшĕн хумханатăн?“ тет. „Хумханмасăр, тет: Сармантейĕн сарă ҫăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хŭрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет: Сармантей те йĕрет сарă ҫăххи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет“. Çĕнĕ çын калаť: „манăн та пĕр витрене çăпса çĕмĕрес“, тет. Çапса çĕмĕрет витрине. Киле тавăрăнаť. Хуҫамăшĕ

ӡуста çăраť: „кин, мĕшĕн хăрах витрепе анӡах ăсса килтĕн,“ тет. Ăсса килмесĕр, тет: Сармантейĕн сарă ӡăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хӗрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет; Сармантей те йĕрет, тет, сарă ӡăххи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнат тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет, тет, шыв та хумханаť.“ Хуӡамăшĕ калаť: „манăн та ӡустана кăларса ывăтас,“ тет. Кăларса ывăтаť. Ывăлĕ кайнă вăрмана. Тавăрăнаť вăрмантан. Ывăлĕ калаť: „мĕшĕн, йашка пĕçермерĕр?“ тет. Амăшĕ калаť: „Сармантейĕн сарă ӡăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хӗрипе çăпса çĕмĕрнĕ, тет: Сармантей те йерет, тет, сарă ӡăххи те какалаť, тет, хапхи те уçăлса хупăнаť, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрсе анаť, тет, шыв та хумханаť, тет, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ тет, хуӡамăшĕ те ӡустĕне кăларса ывăтнă. Ывăлĕ калаť: „Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас,“ тет. Кăларса ывăтаť. Пĕтрĕ. Уксах çынсем çӗреççĕ вĕт? çавсем, вĕт, вĕсем.

18. Иван тарçă.

Ĕлĕк пĕр Иван йатлă çын йалан пĕр хуçа

патĕнҫĕ тарçăра тăнă. Вăл ĕлĕк çамрăк ҫухне аван ĕçленĕ те, халĕ ватăлсан, унăн ĕçлеме вăйĕ çитейми пулнă. Хуçи ăна çавăнпа ĕçлейменшĕн хăваласа йанă. Иван тарçă михĕ илсе кайнă килне. Вăл çулла пынă ҫухне, ăна хирĕç икĕ кайăка çӳрекен çынсем кашкăр хăваласа пыраççĕ мĕн; кашкăрĕ Иван тарçă патне çитсен каланă ăна: „ман хыçăмран икĕ çын мана хăваласа килеççĕ, епĕ ниçта тарса хăтăлаймастăп вĕсенҫен, есĕ мана тархашшăн ху миххў ăшне ҫик.“ тенĕ. Иван тарçă ăна миххи ăшне ҫикнĕ те, хул-пуççи çине çакса йарса, малалла утнă. Ăна хирĕç хайхи кашкăра хăваласа пыракан çынсем тĕл пулнă та, унтан ыйтнă: „есĕ кашкăр курмарăн-а? епир кашкăр хăваласа килеттĕмĕр те таçта кайрĕ, куçран çухатрăмăр,“ тесе. Ку Иван тарçă вĕсене хирĕç каланă: „манăн куç-пуç та витĕрех мар, темĕн, епĕ кашкăр масар курмарăм,“ тенĕ. Кайăка çӳрекенсем иртсе кайнă вара унтан. Вĕсем иртсе кайсан, кашкăр Иван тарçă каланă: „иртсе кайрĕç-и? иртсе кайрĕç пулсан, мана михĕрен кăларса йар ĕнтĕ?“ тенĕ. Иван

тарçă кашкăра кăларса ĕанă. Кашкăрĕ пырсан, пырсан, Иван тарça каланă: „мĕн тăвас, епĕ сана çийетĕп ĕнтĕ?“ тенĕ. Иван тарçă ăна хирĕç каланă: „ак тамаша, епĕ сана çав тĕрлĕ пысăк хурăлăхран хăтартăм та, есĕ мана çийесшĕн тата,“ тенĕ. Кашкăр ăна каланă: „кивĕ çăкăра-тăвара манаççĕ,“ тенĕ. Иван тарçă каланă: „еппин, апла пулсан та, кам хирĕç пулĕ, вăл çиме каласан, çи, унта вара ман ĕç мар, кирек те мĕн ту,“ тенĕ; Кашкăр ун сăмахне итлесе, вĕсем кайнă вара çул палан малалла. Кайсан, кайсан, вĕсем пĕр ватă лашана тĕл пулнă. Ку Иван тарçă каланă ăна: „ну лаша, тус, есĕ пирĕн ĕçе татса пар ĕнтĕ. Епĕ çулпа пынă ҫух кашкăра тĕл пултăм, ăна кайăка çӳрекен çынсем хăваласа килеҫҫĕç; вăл ман патма ҫупса çитсе, мана каларĕ: „мана хыçăмран кайăка çӳрекен çынсем хăваласа килеççĕ, епĕ ниăçта тарса хăтăлаймастăп вĕсенҫен; есĕ мана тархашшăн ху михху ăшне ҫик,“ терĕ. Епĕ ун сăмахне итлесе, ăна çав тĕрлĕ пысăк хурăлăхран хăтартăм та, халĕ ĕнтĕ вăл мана çийесшĕн,“ тенĕ. Лаша ăна хирĕç каланă: „кивĕ

çăкăра-тăвара манаççĕ çав. Акă епĕ те çамрăк ӡухне хуçана пулăшрăм, пулăшрăм та, халĕ ĕнтĕ ватăлсассăн, ĕçлеме вăй çитейми пуçларĕ те, вăл мана хăваласа йаӡĕ.“ тенĕ. Кашкăр Иван тарça каланă: „ава, манăн ӡăн,“ тенĕ. Иван тарçă ăна хирĕç каланă: „аѓа малалла, кайар халĕ, тата кам хирĕç пулаѓ пире, вăл çиме каласассăн, çийĕп вара,“ тенĕ. Кашкăр ун сăмахне каллех итленĕ, вĕсем кайнă вара малалла. Кайсан, кайсан пĕр ватă йытта тĕл пулнă. Иван тарçă каланă ăна: „ну, йытă тус, есĕ пире тӳррине каласа пар. Епĕ кашкăра çав тĕрлĕ пысăк хурăлăхран хăтартăм, вăл мана халĕ çийес, тет, мĕн тумалла ĕнтĕ пирĕн, есĕ пире çут туса йар,“ тенĕ. Йытă ăна хирĕç каланă: „кивĕ çăкăра-тăвара манаççĕ çав. Акă, епĕ те çамрăк ӡухне хуça çуртне сыхларăм, сыхларăм та, халĕ ватăлсассăн сыхлайми пултăм та, вăл мана çуртĕнӡен хăваласа йаӡĕ“ тенĕ. Кашкăр Иван тарça каланă: „ава, каллех манăн ӡăн, çийетĕп ĕнтĕ епĕ сана,“ тенĕ. Иван тарçă каллех каланă ăна: „ну, ĕнтĕ кашкăр тус, тата кăшт кайар та, кам хирĕç пу-

лаť пире, вăл та сан майлă каласан, çи вара,“ тенĕ. Кашкăр каллех ун сăмахне итленĕ, кайнă вара вĕсем малалла. Вĕсем кăшт кайсассăн, тилĕ хирĕç пулнă вĕсене. Иван тарçă хăйсемпе мĕн пулнине, пурне те каланă ăна. Тилĕ вĕсене хирĕç каланă: „епĕ ĕненместĕп; ку тĕрлĕ пысăк йăпала йепле пĕҫĕкçеççĕ миххе кĕнĕ? ну, есĕ унта йепле кĕтĕн, мана кăтарт халĕ,“ тенĕ кашкăра. Кашкăр пуçне кăшт михĕ ăшне ҫиксе кăтартнă. Тилĕ ăна каланă: „есĕ пуçна анҫах ҫикмерĕн пулĕ“ тенĕ; кашкăрĕ вара михĕ ăшне пĕтĕмпех кĕрсе кайнă. Тилĕ Иван тарçа каланă: „есĕ михĕ çăварне йепле çыхрăн? çыхса кăтарт халĕ мана,“ тенĕ. Иван тарçă михĕ çăварне çыхсан, тилĕ каланă ăна: „есĕ анкартинҫе ыраш йепле çапатăн? çăпса кăтарт халĕ мана,“ тенĕ. Иван тарçă ҫукмар илнĕ те: „ак пирĕн ыраш çапла çăпаççĕ“ тесе, михĕри кашкăра çапнă, çăпнă та, вĕлернĕ вара. Çапла вара тилĕ Иван тарça кашкăртан хăтарнă.

19. Тилĕ тус.

Ĕлĕк пурăннă пĕр ватă карҫăкпа ватă ăстарик. Вĕсенĕн анкартийĕ çырма хĕррĕнҫе пулнă;

унта вĕсенĕн арпалăх пулнă; вăл арпалăхра пĕр ырça тулă ларнă. Вăл вăхăтра пĕр тăрнапа пĕр тилĕ тус пулнă. Вĕсем хĕлле пĕр шăтăк алтнă та, икĕш те çавăлте пурăннă. Пурăнсан, пурăнсан тилĕ каланă тăрнана: „есĕ ман валли çиме тупса илсе кил-ҫĕ, манăн çийес килет,“ тенĕ. Тăрна карҫăкпа ăстарикĕн тулли арпалăхра ларнине пĕлнĕ, те, йалан çав тулла тулта пуçланă; вăл тулта, тулта вĕсенĕн туллине çуррине анҫах хăварнă. Тăрна тултнă ҫухне йалан пĕр çулпа çÿренĕ; тулли шав тăккаланса пынă. Карҫăкпа ăстарик туллине тултнине пĕлнĕ те, вĕсем ăна сыхла пуçланă. Сыхласан, сыхласан, ăстарик ун туллине тăрна тултнине курнă та, тăрна тăккаласа çÿренĕ йĕрпе ăна йĕрлесе кайнă; тарнасем пурăнакан шăтăк патнех пырса ҫарăннă. Ăстарик алтма тытăннă, вăл тăрнасем патне алтса çите пуçласан, тăрна хăраса тилле каланă: „тилĕ тус, мĕн тăвар ĕнтĕ, алтса çитет ĕçке?“ тенĕ. Тилĕ каланă ăна хирĕç: „иксĕмĕр те вилем пекки тăвар,“ тенĕ. Ăстарик алтса çитсен, тăрнана илнĕ те, тăрна вилем пекки тунă. Вăл ăна ça-

вăркала, çавăркала пăхнă та, ывăтнă йанă. Вăл ывăтса йарсан, тăрна сиксе тăнă та „тăриллĕк, тăриллĕк!“ тесе тупса, вĕççе кайнă. Ăстарик ун хыçĕнҫен хăвалама тытăннă; çав вăхăтра тилли те шăтăкран тухса тарнă. Ăстарик саступĕсене илсе килне кайнă вара.

Тилĕ инçех тарса кайман, вăл çул хĕррине пырса выртайнă. Çав вăхăтрах вăл çулпалан пĕр ăстарик пулă тийесе пынă. Вăл ăстарик тилле курнă та, ку мана киле пырсан, çĕлĕк тума йурĕ халҫ тесе, ăна илсе пулă тийесе пыракан ырçа ăшне йанă. Тилĕ ырçине шăтарнă та, тухса йулнă; вăл шăтăкран пуллисем те пур те тăкăнса пĕтнĕ. Ăстарик килне çитсен арăмĕ килĕнҫе вут хутнă тĕле пулнă. Вăл лашине тăвармасăрах пӳртне кĕнĕ те, манăн çĕнĕ çĕлĕк тумалли тилĕ пур тесе, çĕлĕкне пуçĕнҫен илсе, кăмакана ывăтнă йанă. Тухса лашине тăварсан, ырçине уççа пăхнă та, тилли те пулман, пуллисем те пĕртте йулман. Ăстарик çĕлĕкне кăмакаран илмешкĕн хăппăл, хаппăл пӳртне ҫупса кĕнĕ те, çĕлĕкĕн кĕлĕ те йулман, пĕтĕмпех çунса пĕтнĕ. Ăстарик икĕ пĕççине шарт çапса

ларса, йĕре пуçланă; çитменне тата карҫăкĕ вăрçа пуçланă.

Тилли пуллисене пурне те пуçтарнă та, пĕр çырмана анса, кула, кула çисе выртнă. Ун патне тата пĕр кашкăр пыпă: „тилĕ тус, мĕн çийетĕн, мана пĕрне пар халĕ, тутлă-и“? тесе ыйтнă. Тилĕ пĕрне панă ăна. Кашкăр тилле каланă: „айхай, тутлă пулҫĕ, тата тепĕрне пар халь“? тенĕ. Тилĕ ăна хирĕç каланă: „манăн хама та сахал, есĕ ху кайса тыт,“ тенĕ. Кашкăр каланă: „есĕ ăçтан тытрăн, йепле тытрăн, мана каласа кăтарт халь,“ тенĕ. Тилĕ каланă ăна: „ав, унта вакă пур, çавăлте хŭрĕне ҫик те, лар; кăшт ларсан, туртса пăх; шатăр тусан тата шаларах ҫик,“ тенĕ. Кашкăр кайса ларнă; ларсан, ларсан туртса пăхнă; шатăр, шатăр тунă, вăл тата шаларах ҫикнĕ. Вăл унта лара, лара унăн хŭри пăр çумне хытă шăнса кайнă. Кашкăр хŭрине туртнă, туртнă; кăларас тесе, темĕн пек асапланнă та, çапах та кăларайман. Çав вăхăтра пĕр майра картлă кĕвентепе, хăрах аллине пуртă тытса, çав вакка шыв ăсма пынă. Кашкăр ăна курсан, тата

хытăрах тапалана пуçланă, çапах та кăларайман. Тилĕ кашкăртан йăвалана, йăвалана кулса, пуллисене çисе выртнă. Майра кашкăра пуртипĕ çапса вĕлернĕ те, ваккине касса, шывне ăсмасăрах, кашкăра илсе, килне сĕтĕрсе кайнă. Çапла вара тилĕ тус икĕ ăстарике хур тунă та, тата кăшкăра та хур тунă.

20. Çырăва вĕренме тытăнакана.

Ирхĕне ăйхăран тăрсан, урăна ҫас сыр, аллăна, питне, куçна авантарах çу та таса алăшăллипе шăл, çăçне тура, пысăклăхпа çых, кĕпăне тăрлет. Унтан вара сана ăйхăран сыв тăратнăшăн Турра кĕл-ту, çав куна сыв пулса, ырă ĕç туса ирттерме Турăран вăй ыйт. Аçу, аннăшĕн, вĕсем сана пăхса ăстернĕшĕн, Турăран сывлăх ыйт. Апат тунă ҫух Турра асăнса çи. Каçхĕне выртас уммĕн Турра кĕл-ту, кĕлтумасăр çывăрма ан вырт. Пăркаланса, вăркаланса ан çăре, тăрĕ çăре. Намăссăр çынсем хушшинҫе ан тăр, вĕсенĕн усал сăмахне ан итле.

Аллăна кĕнеке илсен, малтан вулиҫҫĕн, шухăшла, ку кĕнеке мана мĕн калаť тесе, ăнласа вулам халĕ, те. Кĕнеке йултаннипа пĕр вăл. Ăслă çын йеплеусăлă, тутлă пулаť, ырă кĕнекенĕн сăмахĕ те çаплах пулаť. Ăслă çынпа пĕрле йаланах тăраймастăн, кĕнекене ху çумăнта йаланах тытса тăратăн.

21. Турă çырăвĕ çинҫен илсе çырнă лайхă сăмахсем.

Турăран хăрăнă пур йапалана пĕлме пуçлани; йапаласене вĕренсе пĕлес килсессĕн, малтан Турăран хăра. Ей ывăлăм, Турăран хăра. Турă çын кăмăлне те, ăнăçĕнҫи шухăшне те, пурне те пĕлет. Турă сăмахне ăнласа, Унтан хăраса пурăнакан мухтавлă. Турăран хăрăр, патшана хисеплĕр. Пуçлăхсене итлесе пурăн, Турă лартмасăр пуçлăх пулмасť, пур пуçлăхсене те Турă хуртараť. Пуçлăхсене хирĕç тăвакан, Турă хушнăне хирĕç тăваť.

Аçу, аннў пиллехне илес пулсан, сăмахпа та, ĕçпе те вĕсене хисеплесе тăр. Ашшĕ пил-

лёхё аҕисенён кил-çуртне тёреклёлентерет, амăшё ылханни вёсенён пурăнăçне тёп тăваť. Аçăна сав, аннӳ санпа йывăр курнăне ан ман. Аçу, аннӳ сантан ырăлăх курса тăҕҕăр, савăнса тăмалла пулҕăр. Аҕи ашшё, амăшё сăмахне кирек мён ёçре те итлетёр, Турă вара ăна хăне те йуратё. Ашшёне амăшне хисеплесе тăракан çыннăн Турра кёл-туни те вырăнлă пулё. Ашшёне, амăшне усал сăмах калакана вёлерме тивёçлё.

Сире ырă ёçе вёрентекён çынсенён сăмахне итлёр, вёсем хушнăне ан манăр; вёсем сирён ҕунăрсене сыхлама тăрăшаççё. Ватă çынна ан хурла, ху та ватă пулăн. Ей çамрăксем, ватă çынсене пăхăнса тăрăр.

Ей ывăлăм усал çынсене ан йер, вёсемпе пёрле усал ёç тума ан шухăшла.

Усал ан ту, хăна та усал тимё.

Ей ывăлăм, çылăхран çёлентен тарнă пек тар. Çылăха кёрсессён, урăх çылăх ан ту, ёлёк çылăха кёнине те Турăран каçарма ыйт.

Çăварăнтан нӗ хăçан та усал сăмах ан тухтăр.

Çисен те, ĕçсен те, ĕç тусан та Турра тавта пуç калăр, пур йапалашăн та Турра тавта пуç калăр.

Ей ывăлăм, ҫирленĕ вăхăтра ан хуйхăр, Турра кĕл-ту; Вăл сана ҫĕртĕ. Турă Хăне ҫунтан вартан ҫĕнекене çывăх.

Турра савакан çыннăн пур ĕçĕ те ырра пыраť. Çынна кураймасан, Турра йурататăп тесе каласан, суйа пулаť. Епир пĕр-пĕрĕмĕре савса пурăнсан, Турă та пирĕн хутлăхра пулĕ. Çынна савакан çын çутăра çӳрет, аташмаť; çынна кураймасăр пурăнакан çын тĕттĕмре тăраť, тĕттĕмре çӳрет. Хăна усал туйăнакан ĕçе çынна та ан ту.

Хăра çын усал тунăне каçарăр; есир каçăрсан, çӳлти Аçăр сире те каçарĕ. Çын сире усал тăне хăр каçармасан, çӳлти Аçăр сире те каçармĕ.

Тăшманăрсене те йуратăр, хăра курайман çынсене те ырă сăмах калăр, сире хуйха кӳртекенсемшĕн те Турра кĕл-тăвăр, Ырă кăмăллă пулăр, сирĕн çӳлти Аçăр пит ырă кăмăллă.

Çук çынсене пулăшса паракан çын хăне çăласшăн Турра параť.

Ђăн малтан Турă патшалăхĕпе Унăн тĕрĕслĕхне шырăр. Тĕнђери пур йапалана пуçтарса, хăй ђунне çухатсан çынна мĕн усă?

Ку тĕнђере епир мĕн тунăпе пурне те пиртен Христос ыйтмалли вăхăт пулĕ. Çав вăхăтра таса çынсем Турă патшалăхĕнђе хĕвел пек çутăлĕç. Вĕсем валли Турă мĕн хатĕрлесе хунă, ăна куç та курман, хăлха та илтмен, вăл çыннăн шухăшне те кĕмен,—таса çынсене леш тĕнђере çавăн ђухлĕ лайăх пулĕ.

22. Çырăва пĕлме Турă ăнлантараť.

Икĕ таса çыннăн; Кириллпа Маріенĕн Варфоломей йатлă ывăлĕ пулнă. Вăл çиђĕ çула çитсен, ашшĕсем ăна çырăва вĕренме панă. Варфоломей нађар вĕреннĕ, çавăнпа ашшĕпе амăшĕ пит хуйхăрнă. Вĕрентекен вĕренейменшĕн хĕненĕ ăна, ашшĕсем кунĕ кунĕпе кала, кала вĕренме хушнă ăна; вăл хăй пĕртте ўркенмен, мĕн пур вăйĕпе тăрăшса вĕреннĕ, ан-

ҫах ҫапах ҫырăва ăнланайман. Варфоломей пĕҫĕкҫĕ ҫухнех Турă пулăшмасăр нимĕн ĕҫ аван пулманнăне пĕлнĕ. Пĕр вăхăтра Варфоломей, хăй ҫырăва ăнланайманшăн хуйхăрса, вăрманта пĕҫҫен ҫŭренĕ; ҫавăн ҫухне вăл монаха курнă. Вăл монах йывăҫ айĕнҫе Турра кĕл-туса тăнă. Ăслă аҫа ҫарăннă, вăл кĕл-туса пĕтериҫҫен кĕтсе тăнă. Турă ҫынни кĕл-туса пĕтерсен, Варфоломей ун патне пынă та, пуҫ-ҫаннă ăна. „Мĕн кирлĕ сана, аҫам?“ тесе ыйтнă монах. Аҫа каланă: „Епĕ ҫырăва вĕренетĕп те, анҫах наҫар пĕлетĕп, вĕрентекен каланăне ăнланаймастăп, ҫавăнпа епĕ пит хуйхăратăп, хам мĕн тăвасса пĕлместĕп. Святой атте, йăлăнатăп епĕ сана, кĕл-ту маншăн Турра, Вăл санăн таса кĕллŭшĕн мана пулăшса, ăн патăрҫҫĕ,“ тесе каланă Варфоломей. Турă ҫынни кĕл-туса, Святой хĕрешне пилленĕ те таса аҫана каланă: „ĕнтĕ Турă ҫырăва вĕренме ăн парĕ сана,“ тенĕ. Ҫăнах Варфоломей ҫавăнтан вара ĕлĕкхи пекех тăрăнса вĕренме тытăннă та, ҫасах вĕнеке вулама вĕреннĕ. Вăл Турăн Святой кĕнекисене вулама йуратнă, унпăн аҫа вăйисене

те хăварнă вара. Мĕн ўснĕçемĕн, çавăн ҫуклĕ ытларах Святой кĕнекесене вулама тытăннă, вĕсем çинҫен Турăран хăрама, Турра йуратма, Турă хушнăне ,итлесе пурăнма вĕреннĕ. Унтан вара Варфоломей монаха кĕнĕ. Монаха кĕрсен Варфоломейе Сергій йатлă хунă. Монаха кĕрсен кирек кама та йатне улăштарса, урăх йат параççĕ.

Варфоломей хăй Сергій йатлă монах пулсассăн, Турă умĕнҫе аслă, йурăхлă çын пулнă. Вăл ырă пурăнăçпа пурăнса, нумай çынсенĕн ҫунĕсене çăлма вĕрентнĕ; вăл кĕл-тунипе пирĕн нур патшалăх та асаран хăтăлнă. Вилсессĕн те Турă унăн ўтне çĕрмелле мар тунă, тĕлĕнмелле ĕççем тумалла тунă; халĕ те вăл çўлте, пĕлĕт çинҫе хăне астуса, хисеплесе тăракансемшĕн Турă умĕнҫе ҫарăнмасăр кĕл-тăваť. Çавă Преподобный тĕлĕнмелле ĕççем тăвакан Сергіене сентябĕрĕн 25 кунĕнҫĕ, тата іюлĕн 5 кунĕнҫе астуса хисеплеççĕ; унăн çĕрмесĕр тăракан ўҫĕ Москавран инçе мар, Троицкій Лавра тийекен монастырте выртаť.

Ей Преподобный Сергій атте! кӗл ту пирӗншӗн Турра, санăн Святой кӗллӳшӗн Турă Хăйӗн çыруне пӗлме ăнлантартăр-ҫӗ пире, Хăй хушнине итлесе пурăнма вӗренттӗр-ҫӗ пире.

23. Ҫиркӗве кӗрсен кӗл-туса пӗтериҫҫен тăма кирлӗ.

Пӗр çук çын пулнă, унăн арăмӗпе пӗр ывăлӗ пулнă, вăл хăй пит йăваш, лайăх çын пулнă; анҫах вăл йепҫе пит хытă выçлăх пулнă та, вӗсенӗн çиме çăкăри те çитмен. Вăл çын хăй çемийӗне тăрантарма урăх май тупаймасăр ывăлне каланă: „ей аҫам, сана пӗр пӗр хуçана тарça памасан, епӗ хамăра тăранса пурăнма май тупаймастăп,“ тенӗ. Ывăлӗ каланă: „епӗ сан сăмахна йалан кăмăлпа итленине пӗлетӗн есӗ, ху йепле шухăшлатăн, çапла ту мана,“ тенӗ. Ашшӗ ывăлне тарça панă; пиллесе йанă ҫухне, каланă ăна: „акă, аҫам, ман ӳкӗтӗм сана çакă: кӗлӗ вăхăтӗнҫе ҫиркӗве каймасăр ан йул, кайсан кӗлӗ пӗтмесӗр ҫиркӳрен ан тух!“ тенӗ. Вăл аҫа хуçа патӗнҫе пурăннă ҫух хуçине те

пит тăрăшса ĕç тунă, кĕлĕ пулма-ссерен ҫиркĕве кĕлле те кайнă. Çав хуçанăн арăмĕ хăйсенĕн пĕр тарçипе савăшса пурăннă, ăна ку çĕнĕ кĕнĕ çук çын аҫи пĕлнĕ; çавăнпа хуçа арăмĕ кăна пĕтерме шухăшланă. Вăл упăшкине елекленĕ: „çĕнĕ тарçă сана вĕлерес тесе шухăшлаť,“ тенĕ. Вăл арăмăн упăшки, çав хуçа, ĕçне ыйтса пĕлмесĕрех, пĕр тӳрепе тĕл пулнă та, каланă: „епĕ сан патна пĕр тарçăма тутăр парса йарăп, есĕ ун пуçне касса татса, тутăр çине ҫĕркесе хур; тепĕр тарçăм пырсан тутăрпа лешинĕн пуçне парса йар,“ тенĕ. Çав çĕнĕ кĕнĕ çук йĕкĕте тутăр парса йанă; йарсан, вăл хуçи хушнипе, нимĕн пĕлмесĕр вилĕме кайнă. Кайнă ҫухне вăл ҫиркӳ умĕнҫен иртсе каймалла пулнă, вăл вăхăтра ҫиркӳре кĕлĕ пулнă; ҫиркӳре кĕл-туса йурланине илтсен, вăл ашшĕ пилленĕ ҫухне каланă сăмахсене асне илнĕ те, ҫиркĕве кĕлле кĕнĕ. Унта вăл кĕлĕ пĕтиҫҫенех тăнă.

Пăртакçĕ тăрсан хуçисем тӳре патне каҫҫăн пуçне илсе тавăрăнма айăплă тарçине йанă: Вăл тарçă ҫиркӳ патĕнҫен иртсе кайнă ҫухне

ҫиркӗве пӑхса тухам халӑ тесе ҫиркӗве кӗнӗ; ҫавӑлте йулташне курсан, ыйтнӑ унтан: „тӳре патне кайрӑн-и?“ тесе. Лешӗ каланӑ: „кайман халӑ, кӗлӗ пӗтиҫҫен тӑрас килет, есӗ ман вырӑна ҫак тутӑра леҫме кай-ҫӗ, епӗ сан вырӑнна хирӗҫ мӗн каланине ыйтма кайӑп,“ тенӗ. Айӑплӑ тарҫӑ тутӑра илсе кайнӑ; тӳре, ӑна кӑна пӗлмесӗр, тутӑр илсе пыракан тарҫӑнӑн пуҫне кастарнӑ. Кӗлӗ пӗтсен, пуҫне кастарма тесе йанӑ тарҫи тӳре патне мӗн хушӗ, мӗн калӗ тесе хыпар илме пынӑ; пырсан тӳре ӑна тутӑр ҫине ҫӗркесе темӗн панӑ; ку тарҫӑ тутӑр ҫинҫи йапалана пӗртте пӑхмасӑр илсе тавӑрӑннӑ та хуҫине панӑ. Хуҫисем вӑл сывӑ халлӗн тавӑрӑннине, тутӑр ҫинҫе хӑйсенӗн савнӑ тарҫийӗн пуҫне курсан аптранӑ. Унтан вара ку ӗҫ йепле пулҫӗ тесе ыйтса пӗлнӗ; ҫавӑн ҫухне вара вӗсем, Турӑ айӑпсӑр ҫынна сыхласа айӑплине вӗлернине ӑнланӑ.

РУССКАЯ АЗБУКА.

О.

пол, стол, окно, кошка, топор, молоко, волк, просо, нос, ухо, волосы, олово, лыко, мыло, коса, мост, колокол, сова, ворона, вино, слово, оса.*)

Б.

брат, баба, лоб, брови, бок, шуба, башмак, бык, баран, собака, рыба, блин, борона, бобы, болото.

Д.

дом, двор, сад, вода, дрова, дым, доска, посуда, дудка, карандаш, борода, молодой, дуб, холод.

Г.

бумага, книга, дорога, грош, голова, губа,

*) Обратить вниманіе учениковъ на то, что въ русскомъ языкѣ к, п, с, с, х, ш не подвергаются особенному смягченію, какъ въ чувашскомъ. Предувѣдомленіе § 11.

голос, сапог, шаг, дуга, луг, стог, гора, город, огород, плуг, горох, пирог, погода.

З.

зуб, глаз, зыбка, базар, зима, мороз, замок, золото, воз, сказка, гроза.

Ж.

жар, сажа, кожа, жила, живой, дождик, ложка, межа, жук, уж.

Ч.

чугун, чашка, бочка, чай, чайник, чулок, лучина, очки, чисто, ручка, ласточка, бабочка, час.

Ц.

лицо, овца, улица, птица, курица, цыган, рукавица.

е.

перо, песок, ведро, чека, серп, поле, село, тепло, дерево, плечо, серебро, бревно, сестра, воробей.

ѣ.

человѣк, тѣло, колѣно, отец, слѣд,*) Сергѣй, Алексѣй, грѣх, ѣда, хлѣб, тѣсто, рѣпа, орѣх, мѣл, рѣшето, телѣга, желѣзо, мѣра, лѣто, лѣс, свѣт, мѣсто, сѣно, цвѣток, вѣтер, дѣло, снѣг.

ъ.

клопъ, паукъ, уголъ, колосъ, воскъ, громъ, кусокъ, макъ, ротъ, ножъ.

ь.

Царь, учитель, грудь, церковь, дверь, пыль, огонь, уголь, деньги, мѣдь, камень, гвоздь, печь, рубль, письмо, ось, цѣпь, лапоть, кисель, мать, лошадь, морковь, гусь, голубь, лебедь, медвѣдь, шмель, день, ночь, сажень, счастье, есть, ѣсть, сѣсть, жизнь.

і.

синій, сладкій, горькій, міръ, Владиміръ.

---

*) Обратить вниманіе учениковъ на мягкое произношеніе согласныхъ: с, з, т, д передъ гласными: ѣ, е, и, я, ю, е.

Я.

яма, яйцо, языкъ, ягода, ястребъ, яблоко, ячмень, шея, семья, поясъ, шлея, змѣя, свинья, имя, зять, дитя, ноздря, пѣсня, мясо, земля, сѣмя, рябина, конопля, время.

Щ.

женщина, нищій, священникъ, щека, щетина, щи, щука, лещъ, ящерица, щепка.

Ф, Ѳ.

Ѳедоръ, Ѳома, Ѳедотъ, Филиппъ, Ефимъ, фунтъ, фонарь, кафтанъ, грифель, картофель, фартукъ.

Ю.

я мою, пою, дую, даю, играю, рюмка, брюхо, ключъ, клювъ, вью, шью, пью, лью.

Э.

этотъ, эта, эхо.

Ё.

тётка, котёлъ, верёвка, ёжъ, осёлъ, козёлъ,

ягнёнокъ, телёнокъ, цыплёнокъ, орёлъ, ёршъ, овёсъ, лёдъ, мѣшёкъ, чёрный, жёлтый.

а А, б Б, в В, г Г, д Д, е Е, ж Ж, з З, и И, і І, к К, л Л, м М, н Н, о О, п П, р Р, с С, т Т, у У, ф Ф, х Х, х Ц, ч Ч, ш Ш, щ Щ, ъ Ъ, ы Ы, ь Ь, ѣ Ѣ, э Э, ю Ю, я Я, ѳ Ѳ.

1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8, 9. 10.

Андрей. Борисъ. Василій. Григорій. Димитрій. Ерастъ. Захаръ. Игнатій. Іосифъ. Карпъ. Лаврентій. Максимъ. Николай. Ольга. Павелъ. Романъ. Сергѣй. Тихонъ. Ульяна. Филиппъ. Христофоръ. Юлія. Юрій. Яковъ. Щегловъ. Ѳома. Шиповъ. Это имена людей, а вотъ названія городовъ и рѣкъ: Москва, Петербургъ, Казань, Симбирскъ, Самара, Буинскъ, Тетюши, Алатырь, Бугульма, Чистополь, Ядринъ, Чебоксары, Цивильскъ; Волга, Кама, Сура, Свіяга, Черемшанъ.

ТАБЛИЦА УМНОЖЕНІЯ.

1 - жды	1	. . .	1
2 - —	2	. . .	4
2 - —	3	. . .	6
2 - —	4	. . .	8
2 - —	5	. . .	10
2 - —	6	. . .	12
2 - —	7	. . .	14
2 - —	8	. . .	16
2 - —	9	. . .	18
2 - —	10	. . .	20
3 - жды	3	. . .	9
3 - —	4	. . .	12
3 - —	5	. . .	15
3 - —	6	. . .	18
3 - —	7	. . .	21
3 - —	8	. . .	24
3 - —	9	. . .	27
3 - —	10	. . .	30
4 - жды	4	. . .	16
4 - —	5	. . .	20
4 - —	6	. . .	24
4 - —	7	. . .	28
4 - —	8	. . .	32
4 - —	9	. . .	36
4 - —	10	. . .	40
5 - тью	5	. . .	25
5 - —	6	. . .	30
5 - —	7	. . .	35
5 - —	8	. . .	40
5 - —	9	. . .	45
5 - —	10	. . .	50
6 - тью	6	. . .	36
6 - —	7	. . .	42
6 - —	8	. . .	48
6 - —	9	. . .	54
6 - —	10	. . .	60
7 - мью	7	. . .	49
7 - —	8	. . .	56
7 - —	9	. . .	63
7 - —	10	. . .	70
8 - мью	8	. . .	64
8 - —	9	. . .	72
8 - —	10	. . .	80
9 - тью	9	. . .	81
9 - —	10	. . .	90
10 - тью	10	. . .	100
10 - тью	100	. . .	1000